25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942
НОЯБРЬ
5
КĔÇНЕРНИКУН
259 (6194) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Европăри халăхсене юнлă чуралăха кĕртсе ӳкернĕ нимĕçсен фашистла захватчикĕсем—пĕтĕм тĕнчери ирĕклĕхе юратакан халăхсен ылханлă тăшманĕсем тĕп пулччăр!

(Октябрьти социализмлă Аслă революци XXV çул тултарнă тĕле ЦК ВКП(б) кăларнă лозунгсенчен)

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тата вĕсем ССР Союзĕнчи граждансене, колхозсене, обществăллă организацисене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳнĕ сиенсене тĕпчесе палăртас тĕлĕшпе Государствăн Чрезвычайнăй Комиссине тăвасси çинчен

Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем, Совет Союзĕ çине ултавлăн тапăнса, хăйсем вăхăтлăха тытса илнĕ Совет территорийĕ çинче тĕлĕнмелле тискер преступленисем тăваççĕ—мирлĕ çынсене асаплантараççĕ, пусмăрласа мăшкăллаççĕ, вĕлереççĕ; çĕршер пин совет гражданĕсене ютçĕршыври чуралăха ирĕксĕрлесе илсе каяççĕ; хуларе тата ялти халăха пĕтĕмпех çаратаççĕ, совет гражданĕсен хăйсен тӳрĕ ĕçĕпе пухса пынă пурлăхĕсене, çавăн пекех колхозсемпе государствăн пурлăхĕсене Германие турттарса каяççĕ; Совет Союзĕнчи халăхсен искусствăпа культура памятникĕсене ишĕлтереççĕ, художествăллă, историллĕ пуянлăхсене çаратаççĕ; тĕн кульчĕсен çурчĕсене ишĕлтереççĕ, вĕсен япалисене çаратаççĕ.

Çакă тĕлĕнмелле мĕнпур тискер преступленисемшĕн, нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тăвакан мĕнпур тискер преступленисемшĕн, вĕсем совет гражданĕсене, колхозсене, кооперативлă тата ытти тĕрлĕ обществăллă организацисене, Совет Союзĕнчи государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳрекен мĕнпур материальнăй сиенсемшĕн гитлерла преступникла правительство, Германи çарĕн командованийĕ тата вĕсемпе пĕр каварлисем мĕнпур уголовнăй тата материальнăй ответлăха тытаççĕ.

Нимĕçсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер преступленисене, вĕсем ССР Союзĕнчи граждансене, колхозсене, обществăллă организацисене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳнĕ сиенсене пĕтĕмĕшпех шута илме;

захватчиксем тунă çав преступленисене шута илес тĕлĕшпе советăн государство оргăнĕсем туса пыракан ĕçе пĕтĕçтерсе йĕркелеме;

нимĕç оккупанчĕсем те вĕсемпе пĕр каварлисем Совет Союзĕн гражданĕсене кӳнĕ сиенсене тĕпчесе палăртма тата кашни харпăр хăй тӳснĕ инкеке витмелли висене палăртма;

совет государстви, колхозсемпе обществăллă организацисем тӳснĕ сиенсен висине тата вĕсене совет халăхĕ тĕрĕс ыйтнă тăрăх витме тивĕçлĕ сиенсен пысăкăшне документсем кăтартса панă тăрăх палăртма;

нимĕçсен фашистла преступникĕсене, оккупациленĕ Совет территорийĕ çинче ирсĕр ĕçсем тунишĕн е çав ирсĕр ĕçсене организациленишĕн айăплăскерсене, ăçта май килет, çавăнта пур çĕрте те тытса, суд умне тăратса хаяр накасани парас шутпа тĕпчесе палăртма—

Советлă Социализмлă Республикăсен Союзĕн Верховный Совечĕн Президиумĕ **çапла йышăнать:**

1. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тата вĕсем ССР Союзĕнчи граждансене, колхозсене, обществăллă организацисене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳнĕ сиенсене тĕпчесе палăртас тĕлĕшпе Государствăн Чрезвычайнăй Комиссине тăвас.

2. Гитлерла Германин çаресем тата вĕсемпе пĕр каварлисем совет территорийĕсене оккупациленине пула, гитлерла преступниксем тунă мĕнпур тискер ĕçсем çинчен тата вĕсем совет гражданĕсене, колхозсене, государствăна кӳнĕ материальнăй сиенсем çинчен калакан документсене пухассине, вĕсене тĕрĕслесе хатĕрлессине нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тунă тискер ĕçсене тĕпчесе палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Государствăн Чрезвычайнăй Комиссийĕ çине хурас.

Çав шутпа Комисси май килнĕ таран çаксене тĕплĕнрех шута илме тивĕçлĕ —

а) оккупантсем мирлĕ граждансене вĕлерни çинчен тата вĕсем хӳтĕлĕхсĕр çынсене, хĕрарăмсемпе ачасене, ватă çынсене ирĕксĕрлесе пусмăрлани çинчен калакан фактсене, çавăн пекех совет çыннисене нимĕç чуралăхне илсе кайни çинчен калакан фактсене;

б) гитлерла захватчиксем пурăнмалли çуртсемпе ытти çурт-йĕрсене ишĕлтернипе, хуçалăх инвентарĕсене, продовольстви запасĕсене, выльăх-чĕрлĕхсемпе кайăк-кĕшĕксене, кил-çуртри пурлăхсене çаратса пĕтернипе, çавăн пекех тата халăх çине контрибуципе штрафсем, налогсемпе ытти тĕрлĕ хырçăсем хунипе Совет халăхне кӳнĕ сиенсене;

в) нимĕçсен фашистла оккупанчĕсем тапăнса кĕрсе вăрă-хурахла хăтланса, производствăра тата культурăпа йăла тĕлĕшĕнчен кирлĕ пулса тăракан çуртсемпе сооруженисене тата оборудованине, чĕртаварсен, материалсен, продуктсемпе таварсен запасĕсене, ялхуçалăх культурисем акнă пусăсене, вăрмансене, сат-пахчисемпе çырла-çимĕç пахчисене тата колхозсемпе кооперативсен ытти тĕрлĕ пурлăхĕсене çаратса тата пĕтерсе тăкнипе колхозсемпе кооперативсене, профсоюзсемпе ытти обществăллă организацисене кӳнĕ сиенсене;

г) оккупантсем заводсене, фабрикăсене, электростанцисене, шахтăсене, рудниксене, нефтепромыселсене, промышленноçăн ытти тĕрлĕ сооруженийĕсене тата чугунçулсемпе шоссе çулĕсен оборудованийĕсене, кĕперсене, каналсене, гидротехникăллă сооруженисене, станцисене, портри сооруженисене, тинĕсри тата юханшывсем çинчи суднăсене, автомобиль транспорчĕпе гужевой транспорта, çыхăну хатĕрĕсене, çавăн пекех тата вăрмансене, пасмасене, тырпулсене, нумай çул хушши ӳсекен йывăç-курăксене тата халăхăн ытти тĕрлĕ пурлăхĕсене ишĕлтерсе çаратса пĕтернипе Совет Союзĕнчи государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳрекен сиенсене;

д) гитлерла захватчиксем ССР Союзĕнчи халăхсен художествăллă, культурăллă тата историллĕ пуянлăхĕсене çаратса, пĕтерсе тăкнипе кӳрекен, музейсене, наука учрежденийĕсене, больницăсене, шкулсене, аслă шкулсене, библиотекăсене, театрсене тата ытти тĕрлĕ культурăллă учрежденисене, çавăн пекех тĕн кульчĕн çурчĕсемпе оборудованийĕсене, япалисене ишĕлтерсе пĕтернипе кӳрекен сиенсене;

е) граждансене тата промышленность предприятийĕсене, колхозсен тата ытти тĕрлĕ обществăллă организацисен пурлăхĕсене СССР территорийĕ çине шалалла куçарса кайнипе халăха тата Совет государствине кӳрекен сиенсене комисси май килнĕ таран тĕплĕнрех шута илме тивĕçлĕ.

3. Инкек тӳснисенчен ыйтса пĕлес тĕлĕшпе, гитлерла оккупантсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тăвакан тискер кайăкла ĕçсем, çаратусем, ишĕлтерӳсемпе ытти преступленисем çинчен калакан документсене, свидетельсем кăтартса панисене пухас тĕлĕшпе тивĕçлĕ оргăнсене поручениесем пама Государствăн Чрезвычайнăй Комиссине право парас.

Государство влаçĕн вырăнти оргăнĕсем çине Государствăн Чрезвычайнăй Комиссине унăн ĕçĕнче пур енĕпе те пулăшса пырас обязанноçсене хурас.

4. Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тата вĕсемпе пĕр каварлисем тунă тискер ĕçсене тата вĕсем ССР Союзĕнчи граждансене, колхозсене, обществăллă организацисене, государство предприятийĕсемпе учрежденийĕсене кӳнĕ сиенсене тĕпчесе палăртас тĕлĕшпе ĕçлекен Государствăн Чрезвычайнăй Комиссийĕн çак составне çирĕплетес:

Н. М. ШВЕРНИК (председатель)
Академик **Н. Н. БУРДЕНКО**
Академик **Б. Е. ВЕДЕНЕЕВ**
В. С. ГРИЗОДУБОВА
А. А. ЖДАНОВ
НИКОЛАЙ — Киевски тата Галицки митрополит
Академик **Т. Д. ЛЫСЕНКО**
Академик **Е. В. ТАРЛЕ**
А. Н. ТОЛСТОЙ
Академик **И. П. ТРАЙНИН**

5. СССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕне нимĕçсен фашистла захватчикĕсем тунă тискер ĕçсене тĕрĕслесе тĕпчес тĕлĕшпе ĕçлекен Государствăн Чрезвычайнăй Комиссийĕ çинчен калакан положение çирĕплетме хушас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

Мускав, Кремль. 1942 çулхи ноябрĕн 2-мĕшĕ.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Ноябрĕн 3-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăну та пулман.

Пирĕн карапсем Балтика тинĕсĕнче нимĕçсен пĕтĕмпе 35 пин тонна водоизмещениллĕ 3 транспортне путарнă.

* * *

Ноябрĕн 2-мĕшĕнче пирĕн авиаци фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă, зенитнăй пулеметсен 20 точкине тата 14 минометне пусарса лартнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, противникăн чугунçул тăрăх пыракан 2 эшелонне çĕмĕрнĕ.

* * *

Сталинград районĕнче пирĕн войскăсем хаяррăн çапăçнă. Противник, тылран çĕнĕ вăйсем илсе пырса, икĕ пехотнăй дивизи ытла тата 40 танк наступление кĕртсе янă. Гитлеровецсен атакисене авиаци пысăк вăйĕсем пулăшса тăнă. Çапăçусем питех те хаяр пулнă, час-часах штык вĕççĕн тытăçса çапăçнă. Уйрăм участоксенче нимĕçсем 4—5-шер атака тунă, анчах та вĕсене кашнинчех пысăк çухатусем кӳрсе каялла хăваласа янă. Сталинграда хӳтĕлекенсем нимĕçсен фашистла войскисен пур атакисене те сирсе янă. Пĕр завод районĕнче пирĕн боецсем противникăн пехотипе танкĕсем тунă пилĕк атакăна сирсе янă хыççăн хăйсем контратака пуçласа янă та нимĕçсен тĕреклетнĕ темиçе пунктне йышăнса илнĕ. Çав çапăçусенче, туллимар даннăйсем тăрăх, нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 2000 çынна çити вĕлернĕ тата çар техникине нумай пĕтерсе тăкнă. Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 13 самолетне персе ӳкернĕ. Унсăр пуçне тата пирĕн зенитнăй артиллери противникăн 5 самолетне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре уйрăм участоксенче пирĕн часемпе противник пĕр-пĕрин çине тупăсемпе тата минометсемпе персе тăнă. Панков юлташ командир пулса ертсе пыракан подразделенисем тупăсемпе персе противникăн 4 станковăй пулеметне тата минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă, 6 блиндажне ишĕлтерсе антарнă тата боеприпассен 2 складне сирпĕнтерсе янă. Противник хирĕç тăрассине пусарса лартса пирĕн боецсем атакăна кĕрсе кайнă та нимĕçсен çирĕплетнĕ позицийĕсене йышăнса илнĕ. Персе тата штык вĕççĕн тытăçса вăрçнă çапăçусенче 160 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре совет войскисем противникпа оборонăра тăрса хĕрӳллĕн çапăçнă. Гитлеровецсем хăйсен пехотине танксен атата авиацин пысăк вăйĕсемпе пулăшса пынă. Пĕр участокра пирĕн боецсем противникăн 14 танкне çунтарса янă. Совет летчикĕсем сывлăшри çапăçусенче нимĕçсен 12 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре, пĕр хутор районĕнче, пирĕн подразделенисем тăшманăн пĕр батальонне çавăрса илнĕ, ăна пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ. Тепĕр участокра пĕр высоташăн пынă çапăçура противникăн пехотине 3 рота вĕлерсе тăкнă. Тыткăна илнисем пур.

* * *

Орел облаçĕнчи районсенчен пĕринче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен гарнизонĕ çине сасартăк тапăнса илнĕ. Кĕске тытăçура партизансем противникăн салтакĕсемпе офицерĕсене 29 çынна вĕлерсе тăкнă. Нимĕçсен темиçе салтакне тыткăна илнĕ. Çакăн пек трофейăсем тытса илнĕ: 2 тупă, 6 миномет, 7 пулемет, 60 снаряд, 19.000 патрон, 52 лаша тата 10 тонна тырă. Орел партизанĕсен тепĕр отрячĕ 2 пулемет 10 лаша тата противникăн тумтир складне тытса илнĕ.

* * *

Заречье ялĕнчи (Белорусси) хресченсем нимĕçсен фашистла вăрă-хурахĕсенчен кăштах тăрса юлнă юлашки çĕрулмине пытарнă пулнă. Нимĕçсем çавна пĕлнĕ те 11 колхозника, вăл шутра 53 çулхи Наум Солодовича тата 49 çулхи Николай Лемешкăна, персе пăрахнă. Петр Неровня тата Лука Анцелович колхозниксене гитлерла бандитсем çакса вĕлернĕ, вĕсен виллисене илме чарнă.

* * *

Çак кунсенче Лондонран нимĕç чĕлхипе панă радиопередачăра, Стокгольмран пĕлтернĕ хыпарсем тăрăх тесе, çапла каланă: «Октябрь уйăхĕн пуçламĕшĕнче нимĕçсен командованийĕ Сталинград патĕнче вилесене пытармашкăн вырăссен командованийĕнчен 4 кун хушши перемири тума ыйтнă». Перемири тăвас сĕнĕве нимĕçсем «Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕ урлă» панă пулать. Малалла радиопередачăра çапла пĕлтернĕ: «вырăссен командованийĕ хăй енчен çав сĕнӳпе килĕшет, анчах та пĕр условие лартать. Çав услови — çак ĕç çинчен нимĕçсен командованийĕн малтан Германири общественноçа пĕлтермелле. Нимĕçсен командованийĕ çав условие йышăнман» иккен.

Совет информбюровĕ çакна пĕлтерет: нимĕçсен командованийĕ енчен те е тата мĕнле те пулин «Хĕрлĕ Хĕрес организацийĕ» енчен те совет командованийĕ «4 кун хушши перемири тăвасси çинчен» нимĕнле сĕнӳ те илмен. Çапла вара çакăн пек пулса тухать: Лондонри радио, Стокгольмри шанчăксăр ушкăнран илнĕ сведенисене ĕненсе, малтан пуçласа вĕçне çитиччен çуя хыпар пĕлтернĕ.

Ноябрĕн 4-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Ноябрĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противникпа **Сталинград** районĕнче, **Туапсерен** çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре тата **Нальчикран** кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре çапăçнă.

Ытти фронтсенче нимĕнле улшăнусем те пулман.

* * *

Сталинград районĕнче çапăçусем малалла пулса пынă. Н-ски чăçăн боецĕсем противникăн икĕ атакине сирсе пăрахнă тата нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 300 çынна ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 3 оруди тата 5 станковăй пулемет пĕтерсе тăкнă. Кĕçĕн лейтенант Пискунов командир пулса ертсе пыракан стрелковăй рота противникăн пехотипе танкĕсен атакисене 6 сехет хушши сирсе тăнă. Пискунов юлташ противотанковăй пăшалпа персе нимĕçсен пĕр танкне çĕмĕрнĕ, иккĕмĕш танка красноармеец Быхов юлташ çĕмĕрнĕ, виççĕмĕш танка вара Быховпа старшина Бойко юлташсем иккĕшĕ пĕрле пĕтерсе тăкнă. Гитлеровецсем, чĕрĕ вăй тĕлĕшĕнчен пысăк çухатусем тӳссе, каялла чакнă. Оруди командирĕ сержант Быховский хăйĕн расчечĕпе пĕрле юлашки кунсенче нимĕçсен 6 танкне çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Сталинградран çурçĕр-хĕвеланăçнерехре пирĕн чаçсем хăйсен позицийĕсене çирĕплетсе пынă, противникпа хирĕç-хирĕç персе тăнă. Пĕр участокра пирĕн артиллери пенипе нимĕçсен 4 пулеметне, 20 автомашинине пĕтерсе тăкнă, боеприпассен складне сирпĕнтерсе янă, нимĕç пехотин 2 ротине сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

Гарахин юлташăн подразделенийĕнчи боецсен ушкăнĕ противникăн позицийĕсем çине тапăннă, нимĕçсенчен противотанковăй тупă, 100 снаряд тата 2 пулемет тытса илнĕ. Вязьмин юлташ командир пулса тăракан чаçри снайперсем 44 гитлеровеца вĕлернĕ.

* * *

Нальчикран кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн войскăсем тăшманăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăллă йывăр çапăçусем туса пынă. Н-ски чăçăн артиллерисчĕсем противникăн салтакĕсем пухăнса тăнă çĕре вут-çулăмлă тапăну тунă. 200 гитлеровеца ытла вĕлерсе пĕтернĕ, 3 танк, 12 автомашина пĕтерсе тăкнă.

* * *

Туапсерен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн подразделенисем, артиллерирен нумай мар вăхăт хушши персе хатĕрленĕ хыççăн, нимĕçсене атакăланă та вĕсене çирĕплетнĕ позицисенчен хĕссе кăларнă. Çапăçу хирĕнче тăшманăн 170 вилли выртса юлнă. 4 пулемет, 2 миномет тата боеприпассен складне тытса илнĕ. Н-ски часть темиçе высотана йышăнса илнĕ. Противник контратака тунă, анчах унăн пехоти пĕр ротăна çити вилсе тата аманса пĕтсен, противник малтанхи позицисем патнех чакнă.

* * *

Çурçĕр-хĕвеланăç фронтĕнче, Андреев юлташăн подразделенийĕсем хӳтĕлекен участокра, противникăн пехотин пĕр полкĕ тата 15 танкĕ пирĕн позицисене атакăланă. Пирĕн боецсем нимĕçсене картлакан вут-çулăмпа кĕтсе илнĕ, унтан вара контратакăна куçнă. Çав çапăçура противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 300 çын ытла вилсе тата аманса пĕтнĕ. Нимĕçсен 8 танкне çĕмĕрнĕ е çунтарса янă.

* * *

Финсен 60-мĕш пехотнăй полкĕнчен Хĕрлĕ Çар енне каçнă салтак Илмари В. çапла каласа панă: «Нумаях пулмасть Оулу—Турку хушшинчи чугунçул участокĕнче çар эшелонĕ рельсăсенчен тухса кайнă. Крушенире нимĕçсен 140 салтакĕ вилнĕ тата аманнă. Катастрофа железнодорожниксен айăпĕпе пулнă тесе калаçатчĕç кайран. Участокра çула ремонтлас ĕç пынине вĕсем пĕлнĕ, анчах нимĕçсене çавăн çинчен юрпех асăрхаттарман. Çакна ăна железнодорожниксем нимĕçсене кураймасăр тунă тесе шутлатăп эпĕ».

* * *

Нимĕçсен Чехословакире тăракан войскисене мĕнпур чех халăхĕ кураймасть. Прага çывăхĕнче вырнаçнă нимĕçсен пĕр чаçĕнчен октябрь уйăхĕнче пĕр сас-хурасăр 38 салтак çухалнă. Кайран вĕсенчен хăшпĕрисен виллисене тупнă. Ческе-Будиевиц хулинче патриотсем виçĕ гитлеровеца вĕлернĕ. Гитлеровецсене тапăнасси час-часах пула пуçланă пирки, нимĕçсен командованийĕ салтаксене казармăсенчен пăчченшерĕн тухса çӳреме чарнă.

Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăрту

Завод коллективĕ сталинла вахтăна тăнă

КАНАШ, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнине тивĕçлипе кĕтсе илессишĕн кĕрешсе, вагонсем юсакан завод коллективĕ пысăк çитĕнӳ турĕ. Завод иртнĕ уйăхри производство программине ăнăçлăн вĕçлерĕ.

Уяв умĕнхи ăмăртура завод яланхинчен лайăхрах ĕçлерĕ, чылай цехсем октябрьти плана иртерсе тултарчĕç. Соколовский юлташ начальник пулса, Белоусов юлташ парторг пулса ертсе пыракан цех уйăхри плана 123 процент, Токарев юлташ начальник пулса, Абрамов юлташ парторг пулса ертсе пыракан цех—118 процент тултарчĕç. Çак цехсенчи сменăсенчен Сытник, Князев тата Островский юлташсен сменисем уйрăмах тухăçлăн ĕçлерĕç. Спецпродукци туса кăларакан цехсен куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне заводри жюри Соколовский юлташ ертсе пыракан цех аллинчех хăварма йышăнчĕ.

Тĕп продукци туса кăларакан цехсенчен октябрьти ăмăртура вагонсем тăвакан цех малта пычĕ. Вăл цех уйăхри плана 105,6 процент тултарса, заводăн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Çавăн пекех октябрьти плана йывăççем каскалакан цех 127 процент, утильцех 120 процент тултарчĕç.

Заводри комсомол комитечĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавĕ çамрăксен Чесов юлташ ертсе пыракан бригади аллинчех юлчĕ. Мĕншĕн тесен бригада октябрьте те пысăк ĕç тухăçлăхĕ кăтартрĕ: уйăхри нормăна 345 процент тултарчĕ.

Вагонсем юсакан цех коллективĕ пуçарнипе пĕтĕм завод коллективĕ уяв умĕнхи сталинла вахтăна тăчĕ. Çавна май завод ноябрĕн 1-мĕшĕнчен вара графика пурнăçа кĕртсе ĕçлет.

Г. СОРОКИН,
Заводри партбюро секретарĕ.

Илнĕ обязательствăна пурнăçланă

ÇĔМĔРЛЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Хутарти Ленин ячĕпе тăракан колхоз членĕсем Октябрь уявĕ умĕнхи социализмлă ăмăртăва хутшăнса хăйсем çине илнĕ обязательствăсенчен пĕри вăл — пур фермăсене те выльăхсемпе комплектласа çитересси пулнă.

Колхоз хăй илнĕ обязательствăсене тĕплĕн пурнăçа кĕртсе пырать. Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли 1942 çулти плана пур йышши выльăхсем енĕпе те иртерсе пурнăçланă. Выльăхсене хĕл каçарма тĕплĕн хатĕрленнĕ. Утă-улăмсем, тымар-çимĕçсем çителĕклĕ, 400 тонна силос хывса хăварнă.

— Кăçал эпир уйрăмах выльăх апачĕ ытларах хатĕрлеме тăрăшрăмăр. Мĕншĕн тесен, выльăхсен продуктивноçне ӳстересси вĕсене лайăх тăрантарнинчен нумай килет,—тет колхоз председателĕ Яковлев юлташ.

Паянхи куна кунта выльăхсен витисене юсанă, ăшăтнă, государствăна ашкакай памалли обязательствăна ыт лашшипех тултарнă.

Х. ЛИСИН.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕç вăйланса пырать

КУКЕÇ, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Ĕнерхи куна районри колхозсем кĕрхи çĕртме сухине 5.619 гектар сухаланă. Ку вăл кĕрхи çĕртме тумалли 1942 çулти плана район 71 процент тултарни пулать.

Районри колхозсем кĕрхи çĕртмене Октябрь уявĕччен туса пĕтерессишĕн кĕрешеççĕ. Кĕрхи çĕртме туса пĕтернĕ колхозсен йышĕ ӳссе пырать, колхозниксемпе колхозницăсем сухара кунран кун тухăçлăрах ĕçлеççĕ. Фронтри пек ĕçлемелли эрнеччен районри колхозсем кĕрхи çĕртмене куллен пурĕ 130—190-шар гектар туса пынă пулсан, фронтри пек ĕçлемелли эрнере—ноябрĕн 1-мĕшĕнче—230 гектар, ноябрĕн 2-мĕшĕнче—278 гектар сухаларĕç. Паян сахалтан та 500 гектар сухаламалла.

Кĕрхи çĕртме тăвас ĕçе колхозсен активĕ анлăн хутшăнчĕ. Колхоз председателĕсемпе бригадирĕсем, счетоводсем хăйсем сухалаççĕ, колхозниксене ĕçре пример кăтартса ĕçлеççĕ. Кадыков ячĕпе тăракан колхозри комсомол организацин секретарĕ А. Малинов юлташ куллене 2 гектар сухалать. «Чембек» колхозра кĕрхи çĕртме тунă çĕрте колхоз председателĕ Данилов, счетовод Абрамов, ялсовет исполкомĕн секретарĕ Иванов юлташсем ĕçлеççĕ. «Знамя революции» колхоз председателĕ Антонов юлташ сухара кулленех нормăна 180 процент тултарса ĕçлет. «Туçа» колхоз бригадирĕ Мария Иванова кулленех пĕрер гектар ытла сухалать.

Н. ВАСИЛЬЕВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Ког-сагыз акас плана 103 процент тултарнă

ЕЛЧĔК, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (**Телефонпа**). Хĕл умĕн кок-сагыз акмалли плана район 103 процент пурнăçларĕ. Кок-сагыз валли чи лайăх участоксем уйăраççĕ, вĕсене лайăх çемçетеççĕ. Кăçал хĕл умĕн акмалли участоксем çине пурĕ 21.000 лав тислĕк кăларнă. Кок-сагыз ӳстерекен звеносем районра пурĕ 34 организациленĕ, вĕсенче ĕçлеме 564 колхознике уйăрса çирĕплетнĕ.

Паянхи куна хĕл умĕн кок-сагыз акмалли плана 12 колхоз иртерсе пурнăçланă. Ленин ячĕпе тăракан колхоз 6 гектар акас вырăнне 10 гектар акса хăварчĕ. Çавăн пекех «Коминтерн», «Авангард» колхозсем те планран иртерсе икшер гектар акрĕç.

Ленин ячĕпе тăракан колхозăн Виноградов юлташ ертсе пыракан звени кăçал пысăк тухăçлă кок-сагыз туса илнĕ. Звенора пурĕ 12 колхозник ĕçленĕ. План тăрăх кок-сагыз тымарне гектартан 6 центнер пухса илмелле пулсан, вĕсем вăтам шутпа кашни гектартан 9-шар центнер пухса илнĕ. Звено кăçал хĕл умĕн акмалли участок çине 1.200 лав тислĕк тăкса хăварчĕ. 1943 çулта вĕсем тата пысăкрах тухăçлă кок-сагыз туса илме хатĕрленеççĕ. Вĕсен ĕç опытне районри пур колхозсене те анлăн сарнă. Кăçал районри колхозсем планран иртерсе 25 гектар кок-сагыз акса хăвараççĕ.

М. СЕМЕНОВ.

ДОКЛАДЧИКСЕМ ВАЛЛИ МАТЕРИАЛСЕМ

Чăваш республики Совет влаçĕ 25 çул тултарнă тĕле

Патша Российĕ халăхсен тĕрмийĕ пулнă. Ытти нумай тĕрлĕ национальноçсем пекех, Чăваш халăхĕ ун чухне патшан нацилле буржуази пусмăрĕ айĕнче асапланнă. Чăваш халăхĕ вилсе пĕтес шăпа умĕнче тăнă.

Халăхсене пусмăрлас политикăна Октябрьти социализмлă Аслă революци ĕмĕрлĕхех пĕтерсе хучĕ. Совет Союзĕ пĕтĕм правăллă халăхсен аслă çемьи пулса тăрать. Кашни халăхшăн хуçалăхпа культурăна чечеклентермелли анлă çул уçăлчĕ.

Сталин генийле ертсе пынипе пула, Ленинла-Сталинла наци политикин никĕсĕ çинче тăрса, парти халăхсем хушшинчи хуçалăхпа культура тĕлĕшĕнчи танмарлăха пĕтерес ĕçре çав тери пысăк çитĕнӳсем турĕ. Совет влаçĕн çулĕсенче Чăваш республикин сăн-сăпачĕ пĕтĕмĕшпех улшăнчĕ. Нумай заводсем, фабрикăсем, электростанцисем ӳссе çитĕнчĕç. Промышленноçăн çĕнĕ отраслĕсене пуçарса янă. Малта пыракан социализмлă ялхуçалăхĕ туса хунă. Формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культура ӳссе чечекленчĕ. Пичет, литература, кино, театр, музыка ӳссе аталанчĕç.

Ленинла-Сталинла наци политикине пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пырса. Чăваш республики ӳссе пыракан социализмлă промышленноçлă çĕршыв пулса тăчĕ.

I. ПРОМЫШЛЕННОСТЬ

Шултăра промышленноçăн валовăй продукцийĕ ӳссе пыни

(1926—27 çулсенчи хаксемпе миллионшар тенкĕн шутласан)

Экономикăллă группăсен ячĕсем	1913 çул	1932 çул	1937 çул	1940 çул	1940 çулти продукци çак çулсенчен миçе хут пысăкрах: 1913	1932	1937
Мĕнпур промышленность	13,1	52,7	95,2	125,0	9,5	2,3	1,3
ВĂЛ ШУТРА:							
Производство хатĕрĕсем тăвасси	3,7	41,8	59,9	68,0	18,4	1,6	1,1
Халăха кирлĕ таварсем туса кăларасси	9,4	10,9	35,3	57,0	6,1	5,2	1,6

Çак таблица Чăваш республикинчи мĕнпур промышленность пĕр чарăнмасăр вăйлăн аталанса пынине кăтартса парать. 1940 çулта республикăри промышленность 125 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă, урăхла каласан, çакă вăл 1913 çулта туса кăларнинчен 9,5 хут ытларах пулать. 1913 çулта 13,1 миллион тенкĕлĕх продукци туса кăларнă пулнă.

Производство хатĕрĕсем туса кăларасси уйрăмах вăйлăн ӳссе пырать. Çакă вăл халăх хуçалăхĕн мĕнпур отраслĕсене аталантарас ĕçре татăклă вырăн йышăнса тăрать. Халăха кирлĕ таварсем туса кăларасси, 1913 çултипе танлаштарсан, 6 хут ытларах ӳснĕ пулсан, производство хатĕрĕсем туса кăларасси вара çав вăхăт хушшинчех 18 хут ытларах ӳснĕ. ССР Союзĕнчи ĕлĕк кая юлнă халăхсене малта пыракан халăхсем патне çити ӳстерессишĕн тăрăшакан Ленинла-Сталинла наци политикин çав тери паха результачĕсенчен пĕри çакă пулса тăрать те ĕнтĕ.

Совет влаçĕн çулĕсенче тунă е пĕтĕмĕшпех çĕнĕрен урăхлатса йĕркеленĕ заводсем мĕнпур шултăра промышленность туса кăларакан продукцирен 84,2 процент чухлĕ, вăл шутра «А» группа тăрăх — 87,6 процент чухлĕ, «Б» группа тăрăх—80,2 процент чухлĕ продукци туса кăлараççĕ. Шултăра промышленноçăн уйрăм отраслĕсене илсе пăхсан, картина татах та тĕлĕнмеллерех пулса тухать. Мĕнпур электроэнергие, фосфоритпа аппатита, канифольпе скипидара, пĕветмелли экстрактсене, кирпĕче, сĕтел-пукансене, стандартлă çуртсене, полиграфи продукцине, ată-пушмаксене, аш-какай, пахча-çимĕç, сĕт-çу продукцийĕсене, крахмалпа патокăна тата ытти йышши продукцисене пĕтĕмпех çĕнĕрен тунă е çĕнĕрен урăхлатса йĕркеленĕ предприятисем туса кăлараççĕ. Металпа ĕçлекен промышленноçра çав çĕнĕ предприятисем пĕтĕм продукци хисепĕнчен 73,8 процент чухлĕ продукци туса кăлараççĕ, йывăç каскалакан промышленноçра çĕнĕ предприятисем йывăç каскалакан промышленноçăн мĕнпур продукцийĕсенчен 50,7 процент чухлĕ продукци туса кăлараççĕ. Çакă вăл Чăваш республикинчи мĕнпур промышленноçа Октябрьти революци хыççăн тунине е çĕнĕрен урăхлатса йĕркеленине пĕлтерет.

Совет влаçĕ çулĕсенче пирĕн промышленноçăн çĕнĕ центрĕсем пулса тăчĕç.

Акă Çĕмĕрле. Революциччен вăл 3—4 çуртлă станци посёлокĕ кăна пулнă. Ун чухне кунта 20—30 çын пурăннă. Халĕ вăл — социализмлă хула пулса тăрать, унта нумай пин çын пурăнать. Хула территорийĕ çинче промышленноçăн шултăра предприятийĕсем чылай ĕçлеççĕ, вĕсенчен хăшĕ-пĕрисем союзлă правительствăна пăхăнса тăраççĕ. Хулари шултăра промышленность кăна 1940 çулта 19.789 пин тенкĕлĕх валовăй продукци туса кăларнă. Хулара культурăпа сутĕç тата медицина учрежденийĕсем йышлăн ӳссе çитĕннĕ. Кунта —вăтам тата туллимар вăтам шкулсем 4, ача сачĕсем 5,2 библиотека, клубсем, сасăллă кино-установка, 2 амбулатори, 100 койка вырнаçмалăх 2 больница т. ыт. тĕрлĕ учрежденисем пур.

Канаш хули. Вăл та ĕлĕк станци çывăхĕнчи посёлок кăна пулнă. Кунта (1926 çулта) 1260 çын пурăннă. Халĕ вăл Чăваш республикинчи промышленноçлă пысăк центр пулса тăчĕ. Хула территорийĕ çинче: пĕтĕм Союзра пысăк вырăн йышăнса тăракан вагонсем юсакан завод, райпромкомбинат, райпищекомбинат, аш-какай комбиначĕ, инпошив мастерскойĕ, типографи тата кооператив промышленноçĕн чылай артелĕсем ĕçлеççĕ. Вагонсем юсакан заводăн валовăй продукцийĕ хăй кăна хальхи Чăваш республикин территорийĕ çинче революциччен пулнă шултăра промышленноçăн продукцийĕнчен 2 хут тенĕ пек иртсе каять. Хулара 3 библиотека, педучилище, финанспа экономика техникумĕ, 4 вăтам шкул, 3 ача сачĕ, 2 ача ясли, 4 больница, хĕрарăмсен 2 консультацийĕ, сĕт кухни тата ытти тĕрлĕ учрежденисем ĕçлеççĕ.

Çавăн пекех Куславкка, Вăрнар, Буинск промышленность центрĕсем те хăвăрт ӳссе çитĕнчĕç. Вăрнарти фосфорит завочĕ 1942 çулхи 9 уйăх хушшинче çĕршыва 10.864 пин тенкĕлĕх валовăй продукци пачĕ. Буинскпа Йĕпреç участокĕнче сланец кăларасси ӳссех пырать.

Республикăра район совечĕсен вырăнти тата апат-çимĕç промышленноçĕ вăйлăн аталанчĕ, коопераци промышленноçĕ хăвăрттăн ӳссе пырать. Коопераци промышленноçĕн валовăй продукцийĕ юлашки 4 çул хушшинче кăна 1,7 хут ытларах ӳснĕ, вăл 1940 çулта (1926—27 çулсенчи хаксемпе шутласан) 15.645 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

Чăваш республикинче промышленность Совет влаçĕ пулнă пирки кăна çавăн пек хăватлăн аталанма пултарчĕ. Совет влаçĕ промышленноçа ӳстерес ĕçе çав тери нумай укçа-тенкĕ хывать. Сталинла пятилеткăсен çулĕсенче, 1940 çула çитиччен, промышленноçа хывнă капиталовложенисен хисепĕ (тивĕçлĕ çулсенчи хаксемпе шутласан) 206 миллион тенкĕрен те иртет. Виççĕмĕш пятилеткăра, малтанхи виçĕ çул хушшинче кăна, Чăваш республикинчи промышленноçа 62,5 миллион тенкĕ ытла хывнă.

Промышленноçпа пĕрле, ăна туса тата вĕренсе алла илнĕ çĕрте, рабочи класс ӳссе аталанса пычĕ, производствăллă-техникăллă интеллигенци ӳссе çирĕпленсе пычĕ.

Совет влаçĕн 25 çулĕ хушшинче рабочисен йышĕ республикăра 11,6 хут ытларах ӳсрĕ. Промышленноçра хĕрарăм пысăкрах та пысăкрах вырăн йышăнса тăма тытăнать, шултăра промышленноçра кăна вĕсен хисепĕ (1942 çулти апрелĕн 1-мĕшĕ тĕлне шута илнĕ тăрăх) 6.000 çынран иртет.

Пĕтĕм çĕнĕ промышленноçа кучухнехи малта пыракан техникăпа, чи лайăх станоксемпе тата машинăсемпе хĕçпăшаллантарнă. Çав техникăна алла илни, сложнăй станоксемпе тата машинăсемпе ĕçлеме ăнăçлăн вĕренсе пыни ĕç тухăçлăхне чылай ӳстерме пулăшрĕ. Кашни рабочи, вăтамран шутласан, 1940 çулта 1913 çултинчен 2,4 хут тухăçлăрах ĕçленĕ. Промышленноçăн уйрăм отраслĕсем тăрăх çакăн пек картина курăнать: апат-çимĕç промышленноçĕнче çак вăхăт хушшинче кашни рабочин вăтам ĕç тухăçлăхĕ 2,2 хут, вăрман каскалакан промышленноçра—1,5 хут, сĕтел-пукан тăвакан промышленноçра—4,3 хут, йывăç каскалакан пĕтĕм промышленноçра—2 хут ӳснĕ.

Октябрьти социализмлă Аслă революци 25 çул тултарнă тĕле пур хуласем те, промышленность центрĕсемпе район центрĕсем пурте, çавăн пекех тата малта пыракан чылай колхозсем электричество çутине туянчĕç. Сталинла пятилеткăсем хушшинче икĕ пысăк электростанцисе туса лартса ĕçе янă.

II. ЯЛХУÇАЛĂХĔ

Чăваш хресченĕсен пурнăçĕ революциччен питĕ йывăр пулнă. Чухăнлăх, выçлăх, тĕттĕмлĕх, культурăсăрлăх, правасăрлăх [illegible] пулнă.

Октябрьти социализмлă Аслă революци пулнăранпа ялăн сăн-сăпачĕ пачах улшăнчĕ. Кулак пусмăрĕнче пулнă единоличниксен вак хуçалăхĕсем вырăнне халĕ пирĕн ялхуçалăхĕнче машинăсем[illegible] совхозсен системи пулса тăрать.

1941 çулти июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне пулнă даннăйсем тăрăх, Чăваш республикинче хресченсен килĕсен пĕтĕм хисепĕн 99,2 проценчĕ колхозсене пĕрлешсе тăрать. Вĕсене акăнакан пĕтĕм çĕр лаптăкĕн 98,5 проценте çирĕплетсе панă.

Ĕлĕк чăваш ялĕнче сухапуçне выльăх сӳре пулнă. Халĕ пирĕн колхозсем малта пыракан çĕнĕ техникăпа хĕçпăшалланнă.

Ялхуçалăх машинисен тунин мĕнле ӳссе пынине çак таблица кăтартса парать:

	1933 ç.	1938 ç.	1939 ç.	1940 ç.
1. МТС-сен хисепĕ	8	23	24	25
2. Тракторсен паркĕн вăйĕ (лаша вăйĕпе шутласа)	2.315	21.110	22.311	27.861
3. Комбайнсен хисепĕ	—	277	322	368
4. МТС-сенчи грузовой машинăсен хисепĕ	2	143	120	128

МТС-сенчи машинăсен паркĕ ӳссе пыни МТС-сене хăйсен ĕçĕн пысăкĕшне çулран çулах ӳстерсе пыма май пачĕ. 1933 çулта МТС-сем, çемçе суха çине куçарса авăн çапнине те кĕртсе шутласан, 50.000 гектар ĕçленĕ пулсан, 1938 çулта вĕсем 638,3 пин гектар, 1939 çулта—592,9 пин гектар, 1940 çулта 683,6 пин гектар ĕçленĕ. МТС-сем ĕçленĕ çĕр лаптăкĕ 1933 çулта 33,8 процент пулнă пулсан, 1940 çулта вăл 92,8 процента çитнĕ.

1913 çултипе танлаштарсан, акăнакан çĕр лаптăкĕ 1942 çулта 120 процент чухлĕ ӳснĕ. Акăнакан çĕр лаптăкĕ, пуринчен малтан, кĕрпе тумалли, пăрçа йышши тата техникăллă культурăсем акнипе ӳссе пынă. Çĕрулми, пахча-çимĕçсем лартакан, курăксем акăнакан çĕр лаптăкĕ те ӳснĕ. Çĕнĕ культурăсем: махорка, клевер, люцерна тата ыттисем те акăнма пуçларĕç. 1941 çултан пуçласа чи кирлĕ техникăллă культурăсем—кок-сагызпа сахăр кăшманĕ акма тытăннă.

Ялхуçалăхне коллективизацилени социализмлă çĕрĕçĕн пĕтĕм культури ӳсесси патне, агротехника правилисене çирĕппĕн пăхăнасси патне илсе çитерчĕ. Çакă вара пире тырпул тухăçлăхне революцичченхинчен нумай ытларах ӳстерме май пачĕ. Тĕштырăсене халĕ Чăваш республикинче 1913—1914-мĕш çултинчен 56,2 процент ытларах туса илеççĕ. Тĕштырă культурисен вăтам тухăçлăхĕ 9 çул хушшинче (1932—1941-мĕш çулсенче) 1913 çултипе танлаштарсан 160 процент пулнă.

Колхоз стройĕн никĕсĕ çинче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç хăвăрт ӳссе аталанса пырать. 1933 çултан пуçласа 1942 çулти январĕн 1-мĕшне çити вăхăтра колхозсенчи сĕт-çу фермисен хисепĕ 228-тан 1.673 çити ӳсрĕ, вĕсенчи выльăхсен хисепĕ вара 9.100 пуçран 56.597 пуça çити ӳснĕ. Сысна фермисен хисепĕ 214-ран 1.359 çити ӳснĕ, вĕсенчи сыснасен хисепĕ 16.394 пуçран 69.215 пуça çити ӳснĕ. 1933 çулта сурăх фермисем пачах пулман, 1937 çулти январĕн 1-мĕшне вĕсем 171 пулнă, 1942 çул пуçланнă тĕле —1.433 пулнă. Вăл фермăсенчи выльăхсен хисепĕ вара çак пилĕк çул хушшинче 20.958 пуçран 68.255 пуça çитнĕ.

Кăçалхи октябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне выльăх-чĕрлĕхсен хисепĕ тата чылай ӳснĕ.

III. ТРАНСПОРТ

Халăх хуçалăхĕ аталанса пыни çулйĕрсене лайăхлатма тата йышлатма хушрĕ. Канашпа Шупашкар хушшинче чугунçул тунисĕр пуçне, рельсăсăр çулсен хисепĕ вăйлăн ӳсрĕ. Вĕсен тăршшĕ Чăваш республикин территорийĕнче 1913 çулта 480 километр пулнă, халĕ вара вĕсен тăршшĕ 10.842 километр шутланать. Чăваш республики лайăх çулйĕрлĕ çĕршыв пулса тăчĕ.

IV. КУЛЬТУРА СТРОИТЕЛЬСТВИ

Патша влаçĕ «инородецсен» экономикине кăна мар, вĕсен культурине те пусарса тăнă, вĕсен чĕлхипе нациллĕ культурине—пичете, шкулсене пур майсемпе те хĕснĕ.

Чăваш çĕршывĕ ĕлĕк хутла пĕлмен, культурăсăр çĕршыв пулнă. Совет влаçĕ вăхăтĕнчи 25 çул хушшинче Чăваш республики пĕтĕмĕшпех хутла пĕлекен çĕршыв пулса тăчĕ. Формипе нациллĕ, содержанийĕпе социализмлă культура вăйлăн чечекленсе ӳсрĕ.

Чăваш республикинче вĕренекенсен хисепĕ ӳссе пыни

Вĕренӳ заведенийĕсем	1913—1914 ç.	1932—1933 ç.	1939—1940 ç.	1913 çулхипе танлаштарсан миçе хут ӳснĕ
1. Пуçламĕш, туллимар вăтам тата вăтам шкулсем	29.646	129.211	189.319	6.4
2. Техникумсем тата специалист хатĕрлекен ытти вăтам шкулсем	140	4.514	7.787	55.6
3. Аслă шкулсем	—	501	1.325	—
Пĕтĕмпе	29.786	134.226	198.431	6.6

1913—14-мĕш вĕренӳ çулĕнче Чăваш çĕршывĕнче пурĕ 463 шкул пулнă, 1941—42-мĕш вĕренӳ çулĕнче вĕсен хисепĕ 1031 çитнĕ, урăхла каласан, шкулсен хисепĕ революцичченхипе танлаштарсан, 2,2 хут ӳснĕ.

Октябрьти революциччен пирĕн пĕр аслă шкул та пулман. 1940 çулта пирĕн аслă шкулсем 4, техникумсем 33, вăтам шкулсем 29, туллимар вăтам шкулсем 353 тата пуçламĕш шкулсем 556 пулнă.

Юлашки çулсенче ача-пача учрежденийĕсен хисепĕ те чылай пысăкланчĕ. Икĕ çул хушшинче, 1939 çулти октябрĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа 1941 çулти октябрĕн 1-мĕшне çитиччен, ача сачĕсен хисепĕ 6-ран 79 çити, вĕсенче ачасен хисепĕ 303 ачаран 4.479 ачана çити ӳснĕ.

Культура строительствинче большевикла пичет, кĕнекесем кăларасси уйрăмах паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Чăваш халăхĕшĕн культура, наука тата искусство тĕлĕшпе пĕр-пĕринпе çыхăнса тăма пулăшакан питех те вăйлă хĕçпăшал—пичет пулман та темелле. Совет влаçĕн тивлечĕ çеç чăваш халăхĕн культурипе наукине тата искусствине ӳстерсе çитĕнтерме анлă майсем туса пачĕ. 1940 çулта эпир 5 йышши журнал кăларса тăнă, вĕсен çулталăкри тиражĕ 1.783,6 пин экземпляр пулнă, республикăри, районсенчи, фабрикăсемпе заводсенчи тата колхозсенчи хаçатсем 32 хаçат тухса тăнă, вĕсен пĕр кунхи тиражĕ 114,5 пин экземпляр пулнă. 1941 çулта çеç республикăра чăваш чĕлхипе 300 кĕнеке ытла кăларнă.

V. СЫВЛĂХА СЫХЛАС ĔÇ

Совет государстви ĕççыннисен сывлăхне сыхлассишĕн вăйлăн тăрăшать. Октябрьти революциччен чăваш çĕршывĕнче 19 больница çеç пулнă, халĕ врачсем тата фельдшерсемпе акушерсем пулăшнипе сыватакан учрежденисен хисепĕ 191 çитнĕ, урăхла каласан, вĕсен хисепĕ революцичченхинчен 10,1 хут ытларах.

Ĕлĕк чăваш халăхĕн йывăр инкекĕ—трахома пулнă. Халĕ ĕнтĕ ĕлĕкхи сахманаран юлнă çак йывăр чиртен пĕтĕмĕшпех тасалнă теме те юрать.

Ача амăшĕсене пулăшас ĕç çине уйрăмăнах тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Республикăра халĕ акушерсен пункчĕсем 62, ача çуратмалли çуртсем 91, хĕрарăмсен тата ача-пăча консультацийĕсем ĕçлеççĕ, харпăрхăй тĕллĕн ĕçлекен ача яслисем 42 уçнă, вĕсенче 1.713 койка шутланать.

VI. ЧĂВАШ ХАЛĂХĔ ГИТЛЕРЛА ГЕРМАНИЕ ХИРĔÇ ПЫРАКАН ОТЕЧЕСТВЕННĂЙ АСЛĂ ВĂРÇĂРА

Çĕнĕ пурнăç тунă çĕре халăх питех те нумай вăй, укçа-тенкĕ хурать. Фабрикăсемпе заводсене пысăк вăй хурса туса çитернĕ, çĕнĕ чугунçул линийĕсене хывнă, колхозсемпе совхозсем организациленĕ, шкулсем, клубсем, больницăсем уçнă. Этемлĕхĕн чаплă çыннисем ĕмĕрсем хушши ĕмĕтленнĕ савăнăçлă та ирĕклĕ пурнăç çитрĕ.

Анчах вăрçă пуçланчĕ. Усал тăшман тăван çĕршыв çине тискер-кайăк пек вăрттăн тапăнчĕ. Совет Союзĕнчи халăхсем умне йывăр хăрушлăх тухса тăчĕ.

Çулпуç Сталин юлташ чĕннĕ хыççăн пĕтĕм совет халăхĕ социализмлă тăван çĕршыва сыхлама, унăн ирĕклĕхĕпе никама пăхăнманлăхĕшĕн кĕрешме çĕкленчĕ. Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче [illegible] рĕппĕн те паттăррăн çапăçаççĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕ правительствăн пысăк наградисене илме тивĕçлĕ пулчĕç. Нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан çапăçусенче геройлăхпа паттăрлăх кăтартнăшăн Чăваш АССР Республикинче çуралса ӳснĕ 864 çынна орденсемпе медальсем панă; чăваш халăхĕ пăхса çитĕнтернĕ Ефимов, Орлов, Васильев тата Габайдулин юлташсем Совет Союзĕн Геройĕсем пулса тăчĕç.

Тăшмана аркатса тăкиччен тата хамăр çĕре фашистла ирсĕрсенчен тасатса çитериччен пирĕн татах та нумай çапăçма лекет-ха. Геройла Хĕрлĕ Çара пулăшса тăрассине куллен вăйлатмалла, ĕç тухăçлăхне ӳстерсех пымалла, [illegible]

ССР Союзĕн прокуратуринче

СССР Верховный Совет Президиумĕ 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнче тата 1941 çулти декабрĕн 26-мĕшĕнче йышăннă Указсем тăрăх, производствăра юлхавлăн ĕçлекен, вăрçă вăхăтĕнчи çирĕп требованисене шута илмен тата предприятисенчен хăйсен ирĕкĕпех ĕçрен тухса кайса прогул тăвакан, çапла вара производствăна дезорганизацилекен рабочисемпе служащисене уголовнăй йĕркепе айăпламалла тунă.

Предприяти руководителĕсен совет законĕсене тĕрĕс те пĕр пăркаланмасăр пурнăçа кĕртсе пымалла, дезертирсемпе прогульщиксене çирĕппĕн тыткаламалла.

ССР Союзĕн прокуратури палăртнă тăрăх, предприятисен уйрăм руководителĕсем производство дезорганизаторĕсене хирĕç кĕрешнĕ çĕрте хăйсене законпа панă правăсемпе усă курмаççĕ, дезорганизаторсем çинчен судпа прокуратура оргăнĕсене пĕлтерессине тытса тăраççĕ, прогульщиксемпе дезертирсене закон тăрăх ответ тыттарассинчен пăрăнаççĕ, хăшпĕр чухне вара вĕсене хӳтĕлеççĕ те.

Производство дезорганизаторĕсене хӳтĕлесе усранăшăн, прогульщиксем çинчен тата 1940 çулти июнĕн 26-мĕшĕнчи, 1941 çулти декабрĕн 26-мĕшĕнчи Указсене ытти майпа пăсакансем çинчен пухнă материала судпа прокуратура оргăнĕсене парас ĕçе тытса тăнăшăн ССР Союзĕн прокуратури предприятисен чылай руководителĕсемпе ĕçлĕ çыннисене уголовнăй йĕркепе ответ тыттарнă, вĕсен шутĕнче:

1. «Серп и молот» заводăн директор заместительне Лесникова çулталăк çурă хупса усрамалла суд тунă.

2. 115-мĕш номерлĕ заводри кадрсен отделĕн начальникне Трусова 5 çул хушши хупса усрамалла тунă.

3. 63-мĕш номерлĕ заводри 7-мĕш цех начальникне Смирнова 2 çул хушши хупса усрамалла тунă.

4. «Красный профинтерн» ятлă пир тĕртекен фабрика директорне Сундатова пĕр çул хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле тунă.

Совет законĕ предприяти руководителĕсене рабочисен йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерес тĕлĕшпе, вĕсен пурăнмалли çуртйĕрĕсене тата пĕрлешсе апатланассине лайăхлатас тĕлĕшпе куллен тăрăшма хушать.

СССР прокуратури палăртнă тăрăх, предприятисен хăшпĕр руководителĕсем çак требованисене пурнăça кĕртмеççĕ, уйрăм рабочисен ыйтăвĕсем çине бюрократла пăхаççĕ. Çапла майпа вара предприятисенче прогулсемпе дезертирствăна пĕтерме чăрмантаракан условисем туса хураççĕ. Рабочисен пурнăç условисене юсас тĕлĕшпе тăрăшманшăн тата çак ĕçре кахалланнăшăн СССР прокуратури çаксене арестлесе суда панă:

1. 259-мĕш номерлĕ заводри пурăнмалли çуртйĕр отделĕн начальникне Васильева 2 çул хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă.

2. «Красная Этна» завод директорĕн заместительне Лебедева 2 çул хушши хупса усрамалла тунă.

3. 14-мĕш номерлĕ заводри пурăнмалли çуртйĕр отделĕн начальникне Баранова пĕр çул хушши ирĕксĕр ĕçлеттермелле тунă тата ытти çынсене те айăпланă.

Ĕç дисциплинине пăсакансене ответ тыттарманшăн тата прогулсемпе дезертирствăна пĕтерес тĕлĕшпе мерăсем йышăнманшăн предприятисен руководителĕсене тата ытти работниксене çирĕп ответ тыттарма хушса ССР Союзĕн прокурорĕ пур прокурорсене те кăтарту панă.

Белоруссен халăх поэчĕ академик Якуб Колас çурални 60 çул тултарнă

Ноябрĕн 3-мĕшĕнче совет общественноçĕ белоруссен халăх поэчĕ академик Якуб Колас çуралнăранпа 60 çул тултарнине паллă тунă. Якуб Колас Янко Купалăпа пĕрле белоруссен çĕнĕ литературине пуçарса яраканĕ пулса тăрать, вăл тăван литература чĕлхине аталантарассишĕн питех те нумай ĕçленĕ.

Отечественнăй аслă вăрçă пуçланнăранпа вăл нумай сăвăсем çырнă. Якуб Коласăн çак вăхăтра çырнă сăввисенче белорусс халăхĕ гитлерла захватчиксене пĕтĕм чун-чĕререн курайманни çулăмланса тăрать. Хальхи вăхăтра поэт белорусс партизанĕсем нимĕç оккупанчĕсемпе кĕрешни çинчен пысăк повесть çырать. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

ФРАНЦИРИ ПĂЛХАНУСЕМ

САВОЙĂРА ЗАБАСТОВКĂСЕМ ПУÇЛАНСА КАЙНĂ, ПРЕДПРИЯТИСЕНЕ ХУПНĂ

ЖЕНЕВА, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Францирен килекен хыпарсем тăрăх, Савойăра учрежденисемпе предприятисенче, Лаваль хушнă тăрăх, гитлерла Германие ямашкăн рабочисен списокĕсене тума тытăннă. Çак ĕç пирки Савойăри предприятисенче забастовкăсем пуçланса кайнă. Лаваль приказĕ тăрăх предприятисене нумайĕшне хупнă. Вырăнти полицие вăйлатнă, ăна ятарласа организациленĕ отрядсем хушса панă.

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Дейли мейл» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, Тури Савоя департаментĕнче Франци хĕрарăмсем пысăк демонстрацисем туса ирттернĕ. Вĕсем Франци рабочийĕсене вăйпа ирĕксĕрлесе Германие ĕçлеме янине хирĕç протестленĕ. Демонстрацисенче пулнă халăх çав департаментри икĕ мэр çуртне, çавăн пекех тата тĕрлĕ учрежденисен çурчĕсене йышăнса илнĕ. Влаçсем вĕсене çав çуртсенчен хăваласа кăларма пуçласан, вĕсем влаçсене пăхăнмасăр хирĕç тăнă. Çавăн пек демонстрацисем Францин оккупациленĕ пайĕнче те пулса иртнĕ. Нимĕçсене хирĕç тăрас шухăш-кăмăлсем пуринчен те ытларах Лилль хулинче вăйланса кайнă. Иртнĕ эрне вĕçĕнче, нимĕç коменданчĕ çине тапăннă хыççăн, унта ĕнтĕ иккĕмĕш хут 15 кунлăха чрезвычайнăй положени туса хунă. Октябрĕн 31-мĕшĕпе ноябрĕн 1-мĕшĕнче унта обществăллă учрежденисем пĕри те ĕçлемен, хупă тăнă. Оккупациллĕ влаçсем 12 заложнике персе вĕлернĕ, пăлханусем чарăнмасан тата 24 заложнике, пуринчен ытла хĕрарăмсене, персе пăрахассипе хăратаççĕ.

ЛАВАЛЬ ФРАНЦИН СУТУ-ИЛУ СУДНИСЕНЕ ГИТЛЕРОВЕЦСЕНЕ ПАРАТЬ

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 2-мĕшĕ. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви çапла пĕлтерет: нумаях пулмасть Германи Виши правительствинчен Франци портĕсенче тăракан суту-илӳ суднисене пурне те, вĕсем мĕнле наци пурлăхĕ пулнине пăхса тăмасăрах, Германи аллине пама ыйтнă. Виши правительстви нимĕçсем ыйтнипе килĕшнĕ.

ГРЕЦИ ПАРТИЗАНĔСЕН ХАЮЛЛĂ ĔÇĔСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтерет: Греци партизанĕсен отрячĕ тусем çинчен анса [illegible]

ЕГИПЕТРИ ÇАПĂÇУСЕМ

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, противник ноябрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле англичансен тинĕс хĕрринчи районри позицийĕсене атакăланă. Атакăна сирсе янă. Ĕнер ирхине ирех англичансен пехоти тинĕс хĕрринчен кăнтăралла выртакан участокра наступленине пуçласа янă та чылаях малалла кайнă. Тыткăна нумай илнĕ. Ноябрĕн 2-мĕшĕнче иртен пуçласа каçченех бронетанковăй вăйсем хушшинче вăйлă çапăçу пынă. Хаяр çапăçусем çаплах пыраççĕ. Информаци министерстви пĕлтернĕ тăрăх, çапăçусем Рувей-Сат ятлă тусенчен çурçĕреллерех выртакан районра пыраççĕ пулмалла. Противник хăйне чугунçулпа тинĕс хĕрринчи вырăнта çавăрса илнĕ унка çĕмĕрсе тухма пултарайман.

Ноябрĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле бомбардировщиксен тата тинĕс авиацин чылаях пысăк вăйĕсем тăшман позицийĕсене çĕрĕпех пĕр чарăнмасăр атакăланă. Питех те кирлĕ объектсене пысăк сиен кӳнĕ.

Сывлăшри çапăçусенче тата çĕр çинче противникăн 18 самолетне пĕтерсе тăкнă тата тăшманăн ытти машинисене те чылаях пысăк сиен кӳнĕ.

Кăнтăрла йывăр бомбардировщиксем Тобрука тата тăшман суднисен икĕ караванне тапăннă. 2 эсминеца тата тепĕр суту-илӳ суднине сиенленĕ.

ЛĂПКĂ ОКЕАН ÇИНЧИ ВĂРÇĂ

ЛОНДОН, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ тăрăх, японецсем Çĕнĕ Гвинея утравăн çурçĕренчи çыранне пысăк подкрепленисем антарса хăварма хăтланнă. Союзниксен бомбардировщикĕсем тăшманăн суднисене атакăланă, вара суднăсен ирĕксĕрех çурçĕрелле çавăрăнса каялла каймалла пулнă. Противникăн транспорчĕсене сиенленĕ.

Суэн — Стэнли секторĕнче союзниксем Кокодана йышăнса илнĕ, каялла чакакан японецсене Сиви патнелле хĕстерсе пыраççĕ. Авиаци противникăн Тимор утравĕ çинчи питех те кирлĕ чылай объекчĕсене атакăланă. Вĕсене пурне те вăйлăн ишĕлтерсе антарнă.

НЬЮ-ЙОРК, ноябрĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен тинĕс министерстви пĕлтернĕ тăрăх, Америка войскисем Гвадалканар утравĕ çинче бомбардировщиксем пулăшса пынипе японецсен позицийĕсене атакăланă. Противник каялла чакма тытăннă. Америка войскисен пĕр пайĕ икĕ миля малалла кайнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—28, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31, издательство конторин — 0—23.

Типографи № 1 Управлени полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф. 6. 53 84 п. л.

НТ 1053